Тишкер статйи

# Иван Яковлев калавĕсенчи вĕрентӳпе илемлĕх уйрăмлăхĕсем

https://doi.org/10.31483/r-104928
**УДК** 82-32

**Ядранская И.В.**
Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн регион аталанăвĕ центрĕ,
Шупашкар хули, Раççей Федерацийĕ.
https://orcid.org/0000-0002-9721-3963, e-mail: inessa_yadranskaya@mail.ru

***Аннотаци.*** Статьяра И.Я. Яковлев патриархăн чăваш литературинчи пултарулăхне тиш-кернĕ. Унăн хайлавĕсенче вĕрентӳпе илемлĕх мелĕсем çураçуллă пĕрлешсе тăнине палăртнă. Чăваш литература историйĕн аталанăвĕнче И.Я. Яковлев чăваш ача-пăча литературине никĕслекенсенчен пĕри пулса тăнă. Унăн калавĕсем асра юлакан сăнарлăхпа тата чĕлхе ансатлăхĕпе палăраççĕ. Хайлав сăнарĕсем (çынсем, чĕрчунсем, йывăç-курăксем) вĕсем – пĕчĕк вулакансене ăнланма çăмăл та çывăх персонажсем. Тĕпчевĕн паянхи кун пĕлтерĕшĕ И.Я. Яковлев хайлавĕсемпе кĕçĕн çулхи ачасене (шкул çулне çитмен е кĕçĕн класс ачисене) кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен аталантарас ĕçре анлă усă курма пулнипе çыхăннă. Тĕпчевĕн тĕп тĕллевĕ – çыравçăн калавĕсене тишкернĕ чухне чăваш халăх тĕнче курăмне, хайлаври вĕрентӳ тата илемлĕх уйрăмлăхĕсене пĕр рете лартса тĕпчемеллине кăтартасси. Çакнашкал тишкерӳ хайлавсен пĕлтерĕшне тарăнрах ăнланма пулăшать. Тĕпчев материалĕ статьяра Иван Яковлевăн кĕске калавĕсем тата чăваш литература тĕпчевçисен ĕçĕсем пулса тăнă. Тĕпчев юхăмĕ çакнашкал пĕтĕмлетӳ патне илсе çитерчĕ: Яковлев калавĕсенче халăх сăмахлăхĕ малти вырăна тухать, пĕтĕм чăваш ача-пăча литературин пĕрремĕш утăмĕ тата никĕсĕ пулса тăрать.

***Тĕп сăмахсем:*** Иван Яковлев, чăваш литератури, ача-пăча литератури, калав, вĕрентӳ уйрăмлăхĕ, илемлĕх мелĕ.

***Цитатăлама:*** Ядранская И.В. Иван Яковлев калавĕсенчи вĕрентӳпе илемлĕх уйрăмлăхĕсем // Вĕренӳ аталанăвĕ. – 2023. – Т. 6, № 1. – С. 51-55. – DOI 10.31483/r-104928. – EDN ATWWQK.

Обзорная статья

# Дидактические и эстетические особенности рассказов Ивана Яковлева

**Ядранская И.В.**
Центр регионального развития
Чувашского республиканского института образования,
г. Чебоксары, Российская Федерация.
https://orcid.org/0000-0002-9721-3963, e-mail: inessa_yadranskaya@mail.ru

***Резюме.*** В статье анализируется литературное творчество И.Я. Яковлева. Отмечено, что в его произведениях гармонично соединяются дидактические и эстетические особенности. В истории чувашской литературы И.Я. Яковлев стал одним из основателей чувашской детской литературы. Его рассказы отличаются яркой образностью и простотой языка. Герои произведений (люди, животные, растения) – это близкие для понимания персонажи, живущие рядом с маленькими читателями. Актуальность исследования связана с тем, что произведения И.Я. Яковлева можно широко использовать в нравственном и духовном воспитании детей дошкольного и школьного младшего возраста. В связи с этим целью данной статьи стало акцентирование внимания на том, что при анализе рассказов писателя необходимо на одном уровне рассматривать чувашский национальный менталитет, дидактические и эстетические особенности. Только такой анализ способствует глубокому пониманию главной идеи произведения. Предметом исследования в данной статье выступают короткие рассказы-миниатюры Ивана Яковлева и научные исследования чувашских литературоведов. В ходе исследования были получены следующие результаты: в рассказах Яковлева значимым явлением становится фольклор, его творчество стало первым шагом и основой чувашской детской литературы

***Ключевые слова:*** Иван Яковлев, чувашская литература, детская литература, рассказ, дидактические особенности, эстетические методы.

***Для цитирования:*** Ядранская И.В. Дидактические и эстетические особенности рассказов Ивана Яковлева // Развитие образования. – 2023. – Т. 6, № 1. – С. 51-55. – DOI:10.31483/r-104928. – EDN ATWWQK.

Review Article

# Didactic and Aesthetic Features of Ivan Yakovlev's Stories

**Inessa V. Iadranskaia**
Centre for Regional Development of Chuvash Republican Institute of Education
of the Ministry of Education of Chuvashia,
Cheboksary, Russian Federation.
https://orcid.org/0000-0002-9721-3963, e-mail: yadranskaya@mail.ru

***Abstract.*** The literary creativity of I.Ya. Yakovlev is analyzed in this article. It's noted that his works harmoniously combine didactic and aesthetic features. In the history of the Chuvash literature I.Ya. Yakovlev became one of the founders of the Chuvash juvenile literature. His stories are distinguished by vivid imagery and language simplicity. The heroes of the works (people, animals, plants) are characters close to understanding, living next to young readers. The relevance of the study stems from the fact that the works of I.Ya. Yakovlev can be widely used in the moral and spiritual education of preschool and primary schoolers. In this regard, the purpose of this article was to focus attention on the fact that when analyzing the writer's stories, it is necessary to consider the Chuvash national mentality, didactic and aesthetic features at the same level. Only such an analysis contributes to a deeper understanding of the main idea of the work. The research


CC BY

subject is Ivan Yakovlev's short stories-miniatures and scientific research of Chuvash literary critics. As part of the study, the following results were obtained: folklore becomes a significant phenomenon in Yakovlev's stories, his work became the first step and the basis of the Chuvash juvenile literature.

***Keywords:*** Ivan Yakovlev, Chuvash literature, juvenile literature, short story, didactic features, aesthetic methods.

***For citation:*** Iadranskaia, I. V. (2023). Didactic and aesthetic features of Ivan Yakovlev's stories. *Razvitie Obrazovaniya = Development of Education, 6*(1), 51-55. EDN: ATWWQK. https://doi.org/10.31483/r-104928.

**Умĕн калани**

Илемлĕ литература культурăра киленӳ мелĕ çеç мар, вĕрентӳ хатĕрĕ те пулса тăрать. Илемлĕ хайлав яланах вулакана пурнăçра пулса иртекен е пулса иртнĕ ĕç-пуçа сăнарласа парса пĕлтерĕшлĕ пĕтĕмлетӳсем, кăмăл-сипет суйлавне тума хистет. Илемлĕ литературăн çакнашкал уйрăмлăхне вĕренӳ ĕçĕнче анлă усă кураççĕ. Унран та ытларах, наци литератури амалана пуçланă тапхăрта вĕренӳ ĕçне тивĕçтерекен хайлавсене ятарласа çыраççĕ. Çакнашкал хайлав авторĕсем нумай чух халăха çутта кăларас тата культурине аталантарас ĕçпе çыхăннă. Вĕсен шутĕнче, сăмахран, Кузебай Герда [Васильева, Воронцов 2019] (удмурт литератури), Мухаметсалим Уметбаева [Кунафин, 2016] (пушкăрт литератури), Авксентий Юртова [Зеткина] (ирçе-мордва сăмахлăхĕ) тата Гавриил Яковлев чиркӳ çыннине [Священник…] (çармăс литератури) асăнма пулать. Литература историйĕнче вĕсене просветитель çыравçăсем тесе ушкăнласан тĕрĕс пулать пулĕ.

Чăваш литература аталанăвĕн историйĕнче çакăн евĕр çыравçă Иван Яковлевич Яковлев пулса тăнă. Шăпах унăн пурнăçĕпе пултарулăхĕнче педагогика (шкул ĕçĕ) тата литература уйрăлми çăмхана йăваланнă: «И. Я. Яковлевăн педагогика системинче илемлĕ сăмах воспитани тĕлĕшĕнчен пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăннă. Иван Яковлевич ача-пăча литература вулавне уйрăмах тимлĕх уйăрнă. Хăйпе пĕр вăхăтра ĕçленĕ шкул вĕрентĕвĕн теоретикĕсемпе танлаштарсан, вăл ачасене тăван чĕлхепе çырнă илемлĕ литература вулавне çырулăхпа паллашмалли пĕрремĕш мел пек çеç мар (çав вăхăтра «вырăс мар халăхсене» çутта кăларакансем çак шая çитнипех çырлахнă), çыннăн кăмăл-сипетне, ăс-тăнне, унăн илемлĕх, шухăш-туйăм тĕнчине пĕтĕмĕшле аталантармалли хатĕр пек те хакланă» [Канюков, 1969, с. 99].

Кунта тӳрех çакна та палăртмалла: И.Я. Яковлев хăйĕн пĕтĕм пурнăçне чăваш халăхне çутта кăларас ĕçе халалланă. Илемлĕ хайлавсем çыра пуçлани те чи малтанах çакăнпа çыхăннă. Çапла 1872 çулта çапăнса тухнă чăваш букварĕн [Чувашские…] иккĕмĕш кăларăмĕнче унăн 23 калавĕ кун çути курнă. Çак хайлавсене И.Я. Яковлев чăваш литератури аталанман пирки букваре кĕртме тивĕçлĕ илемлĕ хайлавсем çукран çырнă. Çавăнпа пĕрлех вĕсем чăваш илемлĕ литературинчи ача-пăча хайлавĕсен пĕрремĕш тĕслĕхĕсем пулса тăнă.

В.Я. Канюков тĕпчевçĕ палăртнă тăрăх, И.Я. Яковлев алфавичĕ çине таянса пичетленĕ вĕренӳ кĕнекисем (букварьсем) чăваш илемлĕ литературишĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăнă. Вĕсем профессиллĕ илемлĕ сăмахлăх аталанăвĕ тата халăхăн илемлĕх туртăмĕ çине витĕм кӳнĕ: «И. Я. Яковлев хатĕрленĕ çĕнĕ чăваш алфавичĕпе пичетленĕ пĕрремĕш кăларăм – шкул вулавĕн кĕнеки пулнă. Ăна Яковлевăн чи пĕлтерĕшлĕ ĕçĕ тесе хаклатпăр. Хăй пурăннă вăхăтра Иван Яковлевич ăна яланах лайăхлатса, çĕнетсе пынă, вăл çирĕм ытла кăларăмпа тухнă. Кĕнеке ячĕ ансат пулнă – «Чăваш букварĕ». Чăннипе вара вăл пĕлсе калăпланă воспитани кĕнеки, халăх сăмахлăхĕн, чăваш, вырăс тата Европа литературин хрестоматийĕ пулса тăнă» [Канюков, 1969, с. 100].

Вĕрентӳ хатĕрĕ пек усă куракан хайлавсен хăйсене çеç тивĕçтерекен уйрăмлăхсем пур: вĕсем ача-пăча хайлавĕсен уйрăмлăхĕсемпе пĕрешкел. Ку хайлавсем пĕлӳллĕ тата кăсăклă çеç мар, чăн-чăн сăмах ăсталăхĕн тĕслĕхĕсем. Çавăнпа та вĕсем вулакансене таврари тĕнчен тата çынсен хушшинчи хутшăнусен мĕн пур пуянлăхне уçса параççĕ. Ачасен илемлĕх, çурăçтарулăх туйăмĕсене çуратаççĕ, вĕсене пурнăçри илеме хаклама тата хăйсен курăмне йĕркелеме вĕрентеççĕ. Çакăн пирки тарăнрах эпир маларах калаланăччĕ ĕнтĕ [Мышкина, Ядранская, 2022]. Ку тĕпчевре вара пĕтĕмĕшле Иван Яковлевич Яковлев патриархăн илемлĕ литературăри пултарулăхне пăхса тухăпăр.

**Тĕпчев**

Иван Яковлев хайлавĕсене тимлĕн тишкерсен вĕсем темине кура сахалтан та тăвата ушкăна пайланнине курма пулать:

1) килти чĕр чунсем («Автан», «Ĕнепе качака таки», «Хĕсĕр ĕне» тата ыт.те);

2) тискер чĕр чунсемпе кайăксем («Тилĕ тус», «Тăманапа мулкачă», «Чакак», «Икĕ йĕке хӳре» тата ыт.те);

3) çын пирки («Михала», «Вăрăмтунасемпе старик», «Сармантей» тата ыт.те);

4) мĕнле те пулин ĕç туни («Лаша шырани», «Чăлха çыхни», «Пулă сĕрни», «Утăра», «Йăлăнтарни» тата ыт. те).

Çавăн пекех кунта калавсем калăпăшĕпе пĕчĕк, чĕлхипе ансат, сюжет тĕлĕшĕнчен кăсăклă пулнине те палăртмалла. Çакă пĕтĕмпех вĕсене ача-пăча хайлавĕсен уйрăмлăхĕсемпе шайлаштарса, литературăн çак тĕсне тивĕçтерсе тăрать. Иван Яковлев хăй калавĕсенче ачасемпе çамрăксен аталанăвĕнчи хресчен ĕçĕн пĕлтерĕшне пысăка хунă. Çавăнпа хайлавсен тĕп шухăшĕ те ытларах чухне – çын ĕçре кăна хисеп тата хăй вырăнне тупать – тени тавра йĕркеленнĕ («Кулач», «Пирĕн çемье», «Утăра», «Вырмара» тата ыт. калавĕсем). Яковлев çыравçă илемлĕ литература вулавĕн пĕлтерĕшне çамрăксене малашне пурăнма тата хастар ĕçлеме хатĕрлессинче курнă. Çавăнпа та хăйĕн хайлавĕсенче вăл этем тата çут çанталăк, этем тата халăх (общество) хирĕç тăрăвĕн ыйтăвĕсене те хускатнă. Калавсенче пулса иртекен ĕç-пуç пĕр ял çыннисене («Укçа уйăрни»), темиçе халăх çыннине («Пулă сĕрни»), аслисемпе кĕçĕннисене («Йăлăнтарни») пырса тивет.

Акă Иван Яковлевăн «Автан» ятлă калавне илер: «Пирĕн пĕр пысăк хĕрлĕ автан пур. Вăл тăр кăнтăрла


CC BY

урапа ҫине хӑпарать те: «Кики-рик-ку!» – тесе авӑтать. Сасси аван, хӳри илемлӗ, авӑна-авӑна тӑрать. Кикирикки пысӑк, тӗклӗ уралла, качи вӑрӑм. Сирӗн автан ҫапла-и?» [Детские…]. Ку хайлав пилӗк предложенирен ҫеҫ тӑрать, сюжет аталанӑвӗ кунта пачах та ҫук. Ҫав вӑхӑтрах автор куҫ умне ял илемӗн сӑнарне – пысӑк хӗрлӗ автана – питӗ ӗнентерӳллӗ кӑларать. Асӑннӑ калав чӑваш ачисене ҫырӑва вӗрентекен кӗнекере (букварьте) пичетленнине шута илсен, унӑн калӑпӑшӗ питех те меллӗ. Калавра сӑнарласа пани ачасене ҫывӑх. Ҫавӑнпа пӗрлех автанӑн хӑйне евӗрлӗхне тӗплӗн ҫырса пани ачасен илемлӗх туйӑмне те аталантарать. Хӑнӑхнӑ, кулленхи япалара – хӗрлӗ автанра – ҫак кайӑка ыттисенчен уйӑракан паллӑсене курма вӗрентет: «сасси аван», «хӳри илемлӗ, авӑна-авӑна тӑрать», «кикирикки пысӑк», «тӗклӗ уралла», «качи вӑрӑм».

Иван Яковлев хайлавӗсене тишкернӗ чух унӑн ӗҫӗ-хӗлне тата тӗнче курӑмне асра тытмалла. Ҫапла, «И. Я. Яковлев, хӑйӗн вӗрентӳ ӗҫӗн никӗсне халӑх педагогикин курӑмӗпе мелӗсене утмӑлмӗш ҫулсенчи халӑха ҫутта кӑларакансен шухӑшӗпе мелӗсене тачӑ ҫыхӑнтарса хунӑскер, литература пултарулӑхӗнче чи малтанах халӑхӑн сӑнарлӑ сӑмахне шута илнӗ. Чӑваш ачисем пуҫласа кӗнекесенче тӑван халӑх юмахӗсене, юррисене, халапӗсене, тупмалли юмахӗсемпе ваттисен сӑмахӗсене вула пуҫланӑ. Анчах та ҫав хайлавсем тӳррӗн куҫарнӑ халӑх сӑмахлӑхӗн тӗслӗхӗсем ҫеҫ мар, вӗсем халӑх ӑс-хакӑлӗн литература тӗлӗшӗнчен пултарулӑ улӑштарнӑ тӗслӗхӗсем пулнӑ. Яковлев хӑй ҫырнӑ оригиналлӑ хайлавсем те стильпе содержани енчен халӑхӑн ӑса вӗрентекен калавӗсене ҫывӑх. Унӑн кӗнекисем ачасене тӗнче ҫине ӗҫ ҫыннин куҫӗпе, анчах ҫивӗчрех пӑхма, таврари пурнӑҫа ӑнланса, тиркевлӗ йышӑнма вӗрентнӗ» [Канюков, 1969, с. 102]. Тӗслӗхрен, шӑпах ҫакнашкал уйрӑмлӑха ҫыравҫӑн «Кулачӑ», «Михала», «Ҫухалнӑ укҫа тупӑнни» ятлӑ калавӗсенче курма пулать.

Тӗслӗхе «Ҫухалнӑ укҫа тупӑнни» калава тишкерсе тухар-ха. Калӑпӑшӗпе калав пысӑк мар. Акӑ вӑл: «Пӗр ҫыннӑн укҫи ҫухалнӑ тет, вӑррине ниепле тупаймаҫҫӗ тет. Пухӑнать тет пуху. Пуху пухӑнса ҫитсен староста каларӗ тет: «Ватӑсем, вут тухрӗ! Вӑрӑ ҫинче ҫӗлӗкӗ ҫунать», – тесе каларӗ тет. Пӗр ҫын пуҫӗнчи ҫӗлӗкне аллипе ячӗ тытрӗ тет. Вӑрӑ ҫавне пӗлчӗҫ тет вара» [Детские…].

Куратпӑр ӗнтӗ, калава ҫыравҫӑ халӑх сӑмахлӑхӗн стиль уйрӑмлӑхне пӑхӑнса ҫырать. Ҫине-ҫинех, кашни предложенире, «тет» тени халӑх сӑмахлӑхне ҫывӑх. Паллах, содержани тӗлӗшӗнчен ку хайлав ачасемпе ҫын япалине ыйтмасӑр илме юраманни, вӑрлани ырӑ мар ӗҫ пулни пирки калаҫу ирттерме вырӑнлӑ. Анчах чӑваш тӗнчи, тавракурӑмӗ, кӑмӑл-сипечӗ тӗлӗшӗнчен «Ҫухалнӑ укҫа тупӑнни» калав чӑвашла пулманнине каласа хӑварас килет. Пӳрт алӑкне нихӑҫан ҫӑрапа питӗрмен чӑвашсем хушшинче вӑрлани питӗ сайра тӗл пулнӑ. Калаври «вӑрӑ ҫинче ҫӗлӗкӗ ҫунать» тени те вырӑссен «на воре шапка горит» тенипе тӳр килет. Чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗнче те ҫакӑн евӗр каларӑшсем сахал, вӗсенчен чылайӑшӗ вырӑс халӑх сӑмахлӑхӗнчен куҫару мелӗпе кӗнӗ.

«Михала» калавра вара чӑваш тӗнче курӑмне тавлашусӑр кӑтартнӑ. Ҫапла вулатпӑр: «Манӑн Михала ятлӑ юлташ вӗр ҫӗнӗ пушӑ януӗ. Ҫав пушшипе куракана пӗрне ҫапатчӗ. Пӗрре ҫапла ҫисе ларакан йӑмӑкӗ патне пычӗ те пушшипе шарт! тутарчӗ пуҫӗнчен. Йӑмӑкӗ йӗре пуҫларӗ. Амӑшӗ илтрӗ те чупса та кӗчӗ. Михаларан пушшине туртса илчӗ те хӑйне ҫаптара пуҫларӗ. «Ан тив ҫынна, ан тив ҫынна, ак сана!» – терӗ. Ҫапа пӗлмен пушӑ хӑйне ҫаврӑнса тивнӗ тесе ҫавӑнпа каланӑ пулӗ» [Детские…].

Калавӑн тӗп шухӑшӗ чӑвашсен «ҫапма пӗлмен пушӑ хӑйне ҫаврӑнса тивнӗ» текен ваттисен сӑмахӗпе тӳр килет. Автор кунта халӑх кӑларӑшне анлӑн тата ӗнентерӳллӗн кӑтартаса пама тӑрӑшать. Чӑнласах та, калавра пулса иртекен ӗҫ-пуҫ – пурнӑҫри лару-тару: аслӑ ачасем кӗҫӗннисене сӑлтавсӑр кӳрентерни, паллах, яланах пулнӑ. Калав вӗҫӗ вара ҫакнашкал хӑтлану мӗн патне илсе ҫитерме пултарнине кӑтартать – ҫынна ҫапнӑ пушӑ хӑвӑн ҫурӑм тӑрӑх та лекме пултарать иккен.

Кунта ҫакна та палӑртмалла: XIX ӗмӗр вӗҫӗнче чӑваш литературине кӗнӗ Чӗмпӗр чӑваш шкулне пӗтернӗ ҫыравҫӑсем хайлав анлӑшӗнче халӑх сӑмахлӑхӗнчи ваттисен сӑмахӗсемпе каларӑшӗсене уҫса пама тӑрӑшнине курма пулать. Сӑмахран, ҫак тӗлӗшрен Игнатий Иванов (1848–1883) ҫыравҫӑн пултарулӑхӗ курӑмлӑ. Унӑн «Ҫынна епле тӑван, ху та ҫавна куран», «Ҫынна мулшӑн туман, мула ҫыншӑн тунӑ», «Ҫынна усал тӑвакан хӑй те усал курать», «Начар сухаланӑ ана ҫине ҫум пусать, начар ҫынна ҫын пусмӑрлать», «Паттӑрӑн пуҫӗ выртнӑ, тараканӑн йӗрӗ выртнӑ», «Чее пул та, ҫынна ан мӑшкӑла» калавӗсем шӑпах ҫакнашкаллисем.

Иван Яковлев ҫыравҫӑн нумай хайлавӗ те ҫак туртӑма пӑхӑнса тӑрать. Вӗсен хушшинче ҫӳлерех пӑхса тухнӑ «Михала» калавсӑр пуҫне «Ҫил-тӑвӑл» (*ват. сӑм*: «Аптранӑ кӑвакал кутӑн чӑмнӑ»), «Йӑлӑнтарни» (*ват. сӑм*: «Ҫын аллинчи кукӑль пысӑкккӑн курӑнать»), «Кулачӑ» (*ват. сӑм*: «Ӗҫлесе ҫисен ҫӑкӑр та тутлӑ, тӑрансан пыл та йӳҫӗ»), «Эпӗ ӳкӗнни» (*ват. сӑм*: «Нумай пӗтӗ, сахал ҫитӗ, пӗрле пурӑннине мӗн ҫитӗ»), «Шӑши» (*ват. сӑм*: «Пырна пула пуҫна ҫийӗн»), «Тилӗпе тӑрна» (*ват. сӑм*: «Ҫӑкӑр-тӑвар хире-хирӗҫ»), «Хӗсӗр ӗне» (*ват. сӑм*: Туман тихан пилӗкне ан хуҫ»), «Укҫа уйӑрни» (*ват. сӑм*: «Ахаль тӑриччен кӗрӗк аркине те пулин йӑвала»), «Хветӗр» (*ват. сӑм*: «Ута пӑхакан ҫуран ҫӳремен, ватта пӑхакан выҫӑ ҫӳремен») калавсене те палӑртса хӑвармалла.

Ҫакӑ пӗтӗмпех И. Яковлев литература пултарулӑхӗнче халӑх ӑс-тӑнӗ, унӑн кӑмӑл пуянлӑхӗпе тӗнче курӑмӗ ҫине тайӑнса ӗҫленине кӑтартать. Ҫакӑн пек уйрӑмлӑха нумай чӑваш ӑсчахӗ палӑртать. Сӑмахран, В.Я. Канюков литература тӗпчевҫи хӑй ӗҫӗсенче ҫапла ҫырать: «И. Я. Яковлевӑн оригиналлӑ хайлавӗсем жанр тӗлӗшӗнчен – ӑса вӗрентекен (дидактика) калавӗсем. Унӑн кашни калавӗнче тенӗ пекех халӑх вӗрентӗвӗ (моралӗ) пур, шӑпах вӑл хайлавӑн тӗп шухӑшӗ пулса тӑрать. Тӑтӑшах пӗрлештерсе тӑракан шухӑша е урӑх калава палӑртма вӑл уйрӑм ваттисен сӑмахӗпе усӑ курнӑ. Хӑш-пӗр чух вара ваттисен сӑмахӗнчи шухӑша анлӑлатса оригиналлӑ илемлӗ хайлав ҫырнӑ («Кулач», «Ӳкӗнӳ», «Ҫуркунне» тата ыт.те). Ытларах чухне ҫыравҫӑ калавне пулса ир-


CC BY

текен лару-тăру хăйех вулакана кăмăл-сипет тата халăх каларăшĕн ҫыхăнуллă пĕлтерĕшĕ патне илсе ҫитермелле йĕркеленĕ, кун пек чухне те калу вĕҫĕнче усă курнă ваттисен сăмахĕсем педагогика тата илемлĕх туйăмĕ енчен пĕлтерĕшлĕ пулнă. Ҫак афоризмсем вара, паллах, ҫине-ҫинех ĕҫе, халăхăн йышлă вăйне, этем ăс-тăнне тата пархатарлăхĕпе чыслăхне мухтаççĕ» [Канюков, 1969, с. 102].

В.Я. Канюков тĕпчевçĕ каланă тăрăх, Иван Яковлев чăваш литературине ҫĕнĕ жанр – ăслăлăх ăнлавĕсене уçăмлатакан миниатюра та кĕртнĕ. Ҫакăн евĕр хайлавсен шутне «Чакак», «Мăкăнь», «Ҫўппи» калавсене кĕртмелле.

Акă унăн «Чакак» калавне пăхса тухар. Вулатпăр: «Чакак ҫулла вăрманта пурăнать, юр ҫусан яла пырать. Ҫулла вăрманта вăл чĕпĕ кăларать, ялтан çăмарта вăрласа кайса чĕпписене тăрантарать. Хĕлле, сивĕ пулсан, йывăрлăх ҫине ларать те: «Чак-чакак, чак-чакак», – тесе чакаклатать» [Яковлев, 2001, с. 4].

Ку калавра ҫыравçă вулакансене чакак ятлă кайăкăн уйрăмлăхĕсемпе паллаштарать. Кунта эпир ҫак кайăк яла ҫулла ҫеç кĕнине тата чĕпписене тăрантарма ял чăххисен çăмартисене вăрланине пĕлетпĕр. Апла пулсан ҫак кайăк ҫынна сăтăр кўрекен чĕрчун шутне кĕрет.

**Пĕтĕмлетў**

И.Я. Яковлевăн литературăри ĕçĕ-хĕлĕ чăваш илемлĕ сăмахлăхĕпе çутĕç ĕçне çеç мар, пĕтĕм культурине те витĕм кўнĕ, малалла аталанмалли ҫулсем уçса панă. Чăваш литературишĕн Яковлев калавĕсем ача-пăча литературине никĕслекен хайлавсем пулса тăнă [История…, 2015]. Каярахри тапхăрта унăн илемлĕх туртăмĕ (вĕрентў уйрăмлăхĕ) тата литература опычĕ совет саманинчи нумай ҫыравçăн (Трубина Мархви, Илпек Микулайĕ тата ыт.те) пултарулăхĕ ҫине витĕм кўнĕ. Сăмахран, Петĕр Хусанкай, Иван Ивник, Яков Ухсай поэзийĕнче сăвăлла юмах жанрĕ хăйĕн пуласлăхне тупнă. Унран та ытларах паянхи чăваш ача-пăча литературин нумай тĕсĕпе жанрĕ Яковлев пултарулăхĕнчен – унăн классикăлла педагогика тата сăмахлăх шкулĕнчен – кăкланса тухать.


***Список литературы***

1. Васильева О.И. «… как свет для горного растения»: Кузебай Герд о значении и задачах дошкольного воспитания удмуртских детей / О.И. Васильева, В.С. Воронцов // Ежегодник финно-угорских исследований. – 2019. – Т.13. – Вып.2. – С. 258–273.
2. Детские рассказы чувашского просветителя и педагога И.Я. Яковлева (на чувашском языке) [Электронный ресурс]. – Режим доступа: https://vunivere.ru/work27915? ysclid=lazhyw9w48184622403 (дата обращения: 30.11. 2022).
3. Зеткина И.А. Образец воплощенной миссии / И.А. Зеткина [Электронный ресурс]. – Режим доступа: https://www.info-rm.com/2021/03/01/obrazets-voploshchennoy-missii/ (дата обращения: 18.01.2023).
4. История чувашской литературы XX века: коллектив. моногр. / В. Г. Родионов, Г. И. Федоров, А. Ф. Мышкина [и др.]. – в 2 ч.: Ч. 1 (1900–1955 годы). – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2015. – 431 с.
5. Канюков В.Я. И.Я. Яковлев и чувашская детская литература / В.Я. Канюков // Ученые записки. НИИ яз., лит., истории и экономики при Совете Министров Чуваш. АССР. – Чебоксары, 1969. – Вып. 42. – С. 99–103.
6. Кунафин Г.С. Направления и идейно-тематическое содержание творчества Мухаметсалима Уметбаева (к 175-летию со дня рождения) / Г.С. Кунафин // Проблемы востоковедения. – 2016. – №3 (73). – С. 41–46.
7. Мышкина А.Ф. Эстетическое и этическое значение художественного произведения в образовательной среде / А.Ф. Мышкиеа, И.В. Ядранская // Развитие образования. – 2022. – Т. 5. – №3. – С. 32–37. DOI 10.31483/r-103123
8. Священник Гавриил Яковлев – просветитель марийского народа [Электронный ресурс]. – Режим доступа: https://my.mail.ru/community/mariy_el/265FF8B1144DE168.html (дата обращения: 16.01. 2023)
9. Чувашские буквари XIX-XX вв. [Электронный ресурс]. – Режим доступа: http://www.nbchr.ru/virt_azbuki/page3.htm?ysclid=lcysyk6fio407604489 (дата обращения: 16.01.2023).
10. Яковлев И.Я. Ача-пăча калавĕсем. Детские рассказы: на чуваш. и русс. яз / И.Я. Яковлев. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2001. – 48 с.

***References***

1. Vasilyeva, O. I., & Vorontsov, V. S. (2019). "...As a light for mountain plants": Kuzebay Gerd on the meaning and problems of preschool education of Udmurt children. *Yearbook of Finno-Ugric Studies, 13*(2), 258-273.
2. *Detskie rasskazy chuvashskogo prosvetitelya i pedagoga I.Ya. Yakovleva.* (n.d.). Retrieved November 30, 2022, from https://vunivere.ru/work27915? ysclid=lazhyw9w4818462240
3. Zetkina, I. A. (n.d.). *Obrazec voploshchennoj missii*. Retrieved January 18, 2023, from https://www.info-rm.com/2021/03/01/obrazets-voploshchennoy-missii/
4. Rodionov, V. G., Fedorov, G. I., & Myshkina, A. F. & others (2015). *Istoriya chuvashskoj literatury XX veka: kollektiv. monogr. v 2 ch.: Ch. 1 (1900–1955 gody).* Chuvash. kn. izd-vo.
5. Kanyukov, V. Ya. (1969). I.YA. YAkovlev i chuvashskaya detskaya literature. *Uchenye Zapiski, 42*, 99–103.
6. Kunafin, G. S. (2016). Directions and ideological and thematic content of Mukhametsalim Umetbaev's creativity (to his 175th birth anniversary). *The Problems of Oriental Studies, 3*(73)., 41–46.
7. Myshkina, A. F., & Iadranskaia, I. V. (2022). Aesthetic and ethical significance of work of art in educational environment. *Development of Education, 5*(3), 32–37. https://doi.org/10.31483/r-103123
8. *SSvyashchennik Gavriil YAkovlev – prosvetitel' marijskogo naroda.* (n.d.). Retrieved January 16, 2023, from https://my.mail.ru/community/mariy_el/265FF8B1144DE168.html
9. *CHuvashskie bukvari XIX-XX vv.* (n.d.). Retrieved January 16, 2023, http://www.nbchr.ru/virt_azbuki/page3.htm
10. Yakovlev, I. Ya. (2001). *Acha-pacha kalavsem. Detskie rasskazy: na chuvash. i russ. yaz.* Chuvash keneke izd-vi



CC BY

***Информация об авторе***

**Ядранская Инесса Владимировна**, директор, Центр регионального развития Чувашского республиканского института образования, Чебоксары, Российская Федерация; ORCID: https://orcid.org/0000-0002-9721-3963; e-mail: inessa_yadranskaya@mail.ru

***Поступила в редакцию*** 23.12.2022
***Принята к публикации*** 06.02.2023
***Опубликована*** 15.03.2023

***Information about the author***

**Inessa V. Iadranskaia**, chief, Centre for Regional Development of Chuvash Republican Institute of Education of the Ministry of Education of Chuvashia, Cheboksary, Russian Federation; ORCID: https://orcid.org/0000-0002-9721-3963; e-mail: inessa_yadranskaya@mail.ru

***Received*** 23 December 2022
***Accepted*** 06 February 2023
***Published*** 15 March 2023

***Автор ҫинчен пӗлтерни***

**Ядранская Инесса Владимировна,** директор, Чӑваш Республикин вӗренӳ институчӗн регион аталанӑвӗ центрӗ, Шупашкар хули, Раҫҫей Федерацийӗ; ORCID: https://orcid.org/0000-0002-9721-3963; e-mail: inessa_yadranskaya@mail.ru

***Редакцие ҫитнӗ*** 23.12.2022
***Пичетлеме йышӑннӑ*** 06.02.2023
***Пичетленсе тухнӑ*** 15.03.2023


CC BY